# Леонид Агаков феноменĕ

**Г. УТКИН,**
**Раççейри писательсен Союзĕн членĕ**

Чăваш тĕнчине лайăхлатса хăварас тесе тăрăшнă çынсен чапĕ вăхăт иртнĕçемĕн чакса мар, пысăкланса пырать. Леонид Агаков прозаик, драматург, публицист, театр критикĕ, куçаруçă пирки те çавнах каламалла. Иртнĕ кĕркунне Шупашкарăн Çар мухтавĕн музейĕнче талантлă писатель, фронтовик вилнĕренпе 30 çул çитнĕ май асăну каçĕ иртрĕ. Ăна музей ĕçченĕ, пултаруллă сăвăç, юрă ăсти, композитор, Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ Светлана Азамат йĕркелесе ертсе пычĕ, Л. Агаковăн хĕрĕ Алиса, ывăлĕ Владислав ашшĕне ăшшăн аса илсе калаçрĕç. Залра студентсем йышлăччĕ, ватă çынсем те нумайччĕ. Сăмах Леонид Яковлевичăн феноменĕ (никамăннипе танлаштарма çук пултарулăхĕ) пирки пычĕ. Унтанпа самаях вăхăт иртрĕ пулсан та тĕл пулура тухса калаçнă çынсен сăмахĕсем халĕ те хăлхара янăраса тăраççĕ, пуçра çĕнĕ шухăшсем çуратаççĕ.

Етĕрне тăрăхĕнчи Çуткасси çыннин, пуçламăш шкул учителĕн Яков Агаковăн ачисем пĕчĕклех маттур пулнипе палăрса тăнă. Леня пиллĕкрех шакăртаттарса кĕнеке вуланă, Исай килти выльăха çитерме час-часах çерем çине илсе тухнă, Липа юрлама юратнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен варринче Етĕрне районĕнчи «Заветы Ильича» колхозри чăх-чĕп фермин пуçлăхĕ Исай Яковлевич Агаков Чăваш кĕнеке издательствинче «Чăхсем çăмарта тăвассине эпир çапла ÿстертĕмĕр» брошюра пичетлесе кăларнă. ЧР ял хуçалăх министерстви çак кĕнекепе чăх-чĕп фермисенче ĕçлекенсене усă курма сĕннĕ.

Исайăн пиччĕшĕ – Леонид Яковлевич Агаков ку вăхăталла чăвашсен паллă писателĕ шутланнă, повеçсене, пьесăсене, очерксене пĕрле пуçтарса çирĕм ытла кĕнеке пичетлесе кăларнă.

Фронтран вăл 1944 çулта аманса таврăнать те тÿрех кĕнеке издательствинче тĕп редактор ĕçне кÿлĕнет. Вăл вăхăтра вăрçа пула арканнă хуçалăха ура çине тăратасси çĕршывăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулнă. Культурăна, искусствăна, литературăна аталантарассине те манăçа кăларман. Чăваш Енре те вăрçă вăхăтĕнче хупăннă хаçатсемпе журналсене çĕнĕрен кăларма пуçланă. Вăрçăченхи «Сунтал» вырăнне 1946 çулта «Ялав» журнал тухма тытăнать те, унăн малтанхи номерĕсенчех Леонид Агаковăн «Ылтăн вăчăра» повеçĕ пичетленнĕ. Библиотекăсенче ăна çынсем черет тăрса вулаççĕ, çулталăк хушшинчех журнал тиражĕ икĕ хут ÿсет. Вăл иртнĕ ĕмĕрĕн хĕрĕхмĕш çулĕсен вĕçĕнче кĕнекепе пичетленсе тухать. Юлашки утмăл çулта çак повеçе чăвашла тата вырăсла 10 хутчен кăларнă, пĕтĕмĕшле тираж 150 пин экземпляртан та иртсе кайнă.

Леонид Яковлевич пурнăç тăршшĕпех çыравçăн йывăр та кăткăс ĕçне тĕрлĕ учрежденисенче вырăнта ларнă чухне туса пынă. Вăрçă пуçланиччен Мускавра Театр искусствин патшалăх институтне пĕтернĕскер, Шупашкара таврăнсан вăл театр техникумĕнче студентсене вĕрентнĕ, Халăх комиссарĕсен канашĕн çумĕнчи искусство управленийĕн инспекторĕнче, писательсен Союзĕн правленийĕн председателĕнче, «Тăван Атăл» альманах редакторĕнче ĕçленĕ.



Повеç-калав сюжечĕсем пуçра çуралса-капланса тăнă вăхăтсенче вырăнтан тухса килте сĕтел хушшинче ĕçлеме те тивнĕ. Ун пек тапхăрсем унăн пенсие тухиччен 20-25 çул таранччех пуçтарăнаççĕ.

Пурнăçа тарăннăн пĕлни, çăлкуç пек тапса тăракан пултарулăх, илемлĕх тĕнчин вăрттăнлăхĕсене алла илни, чăтăмлăх Агакова литература ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшнă. Романсем, повеçсем, калавсем, пьесăсем, очерксем çырса вăл пурĕ 48 кĕнеке кăларнă. Вĕсен пĕтĕмĕшле тиражĕ çур миллион экземпляртан та иртет. Çапла вара чăваш литературинче вăл чи вулакан автор шутланать. Унăн вун икĕ кĕнеки пĕрре çеç мар, темиçе хутчен те пичетленсе тухнă.

Чăваш драматургийĕнче те вăл самаях сумлă вырăн йышăнать. Унăн «Ултав» тата «Хăват» пьесисем тăрăх Аслă Отечественнăй вăрçăчченех театрсем спектаклсем лартса панă. «Пĕрре, çуркунне», «Ылтăн вăчăра» повеçсем тăрăх хатĕрленĕ инсценировкăсем те Чăваш академи драма театрĕн репертуарне кĕме тивĕçлĕ пулса темиçе çул хушши унтан тухмарĕç.

Куçару ĕçне пур писатель те пултараймасть. Леонид Агаков пирки пултаруллă та тухăçлă тăлмач тени пĕрре те ÿстерсе каланă сăмах мар. Чăваш Республикин Пичет архивĕн фончĕсенче Леонид Яковлевич куçарнă утмăла яхăн кĕнеке упранать (библиотекăсенче вĕсем кивелсе çитсе тахçанах утиле кайнă). Агаков тем тĕрлĕ литература та куçарнă, çапах та илемлĕ литература унăн куçарăвĕсенче тĕп вырăнта тăрать. Вăл шутра Максим Горькин «Манăн университетăмсем» повеçĕ тата «Артамоновсем» романĕ, Александр Островскин «Аслати» драмипе «Бальзаминов авланать» комедийĕ, Александр Фадеевăн «Аркату», Борис Полевойăн «Полк ывăлĕ», Александр Чаковскин «Аякри çăлтăр çути», Чингиз Айтматовăн «Манăн хĕрлĕ тутăрлă тополĕм» повеçĕсем.

Пултаруллă çыравçăн таланчĕн тата тепĕр енне те манса хăварма юрамасть. Вăл – Л. Агаков театр критикĕн тата театроведăн тивĕçĕсене нумай çул хушши мĕн пултарнă таран туса пыни. Чăваш театрĕсем лартнă спектакльсене хакласа вăл республикăри хаçатсенче çеç мар, Мускавра тухса тăракан «Театр» тата «Театральная жизнь» журналсенче те рецензисем пичетлесе кăларнă. Ас тăватăп-ха, республикăри театрсенчен пĕринче Николай Терентьевăн «Пăр çапнă çеçпĕл» драми тăрăх спектакль лартнă хыççăн чăвашла пичетленекен хаçатсенчен пĕринче Леонид Яковлевичăн рецензийĕ çапăнса тухрĕ. Унăн шухăшĕпе килĕшменнисем те тупăнчĕç. Хĕрÿ дискусси пуçланса кайрĕ. Вăл темиçе уйăха пычĕ. Театрсен проблемисемпе писатель яланах кăсăкланатчĕ. Тĕрлĕ вăхăтра унăн хаçат-журналта пĕтĕмпе 200 ытла рецензи-хаклав пичетленсе тухни те çакна лайăх çирĕплетсе парать.

Манăн Леонид Яковлевичпа çывăх паллашма май килмен. Çапах та писательсен съезчĕсенче, творчество союзĕсен пухăвĕсенче эпĕ ăна пĕрре мар курнă. Çиелтен пăхсан вăл сахал калаçакан, çынпа хутшăнма юратман, кăра кăмăллă çын пек туйăнатчĕ. Съездсемпе пухусенче хăйĕн мăшăрĕпе Александра Лазаревапа (чăвашсен паллă писательници) юнашар халăхран уйрăмрах ларатчĕ. Тухса сăмах каланине те ас тумастăп. Унпа пĕрле ĕçленĕ çыравçăсем Василий Давыдов-Анатри, Валентина Эльби, Иван Вашки ăна хисеплесе, ăшшăн аса илеççĕ. Салхуллă пит-куç, сÿрĕк кăмăл уншăн хăйне хÿтĕлеме кирлĕ маска çеç пулнă тесе ĕнентереççĕ, вăл усă кăмăллă, мухтаннине юратман, йăпăлтатнине чунтай курайман çын пулнине çирĕплетеççĕ.

Писателе халăх питĕ хисепленине влаçра ларакансем лайăх курса тăнă. Унăн литературăри ĕçĕ-хĕлĕ ăнăçлă пулса пынине те пĕлмен мар. Çавна кура ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, медальсемпе, икĕ хутчен Чăваш АССР Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă, «Чăваш халăх писателĕ» хисеплĕ ят панă. Вăл чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ пулнă.

Вăхăт малаллах шăвать. Паллă çыравçă чĕррисенчен уралса кайнăранпа та 30 çул иртрĕ ĕнтĕ. Леонид Яковлевич питĕ ир, 67 çултах çĕре кĕнĕ. Унăн вил тăприйĕ – Богдан Хмельницкий урамĕнчи асăну масарĕ çинче. Общественность представителĕсем те, хĕрĕпе ывăлĕ те ăна лайăх пăхса тăраççĕ. Кĕнекисене халăх хапăлласах йышăнать. Сăмах май, автор вилнĕ хыççăн «Ылтăн вăчăра» виçĕ хутчен, «Юманлăхра çапла пулнă» икĕ хутчен çапăнса тухнă.